73
3322
41-93

А. КĂЛГАН



# АЧА-ПĂЧА САВВИСЕМ

А. КĂЛГАН

# АЧА-ПĂЧА САВВИСЕМ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ 1941

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве 5
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
4 . VIII 1942
Подпись

## Октябренок юрри

Атте хаяр вăрçăра
Фашистсене аркатать,
Анне тăван колхозра
Машинпала тыр пухать.

Эп те ахаль лармастăп,
Хĕрлĕ Çара пулăшап,
Юлташсемпе ăмăртса
Тимĕр-тăмăр пуçтарап.

Атте, çапăç паттăррăн,
Анне, ĕçле тăрăшса.
Лайăх пулĕ пурăнма
Фашистсене тĕп тусан.

## Пулас кавалерист

Утлантăм ута эп,
Вылятрăм хĕçе,
Тăшмансене хирĕç
Çил евĕр вĕçеп.

Киревсĕр фашист, эс
Тараймăн манран,
Пĕрех сулса касăп
Сана çурмаран.

Эс выртăн та юлăн
Йăваннă мих пек,
Эп вĕçĕп хăюллăн
Аçа-çиçĕм пек.

Хура çĕлен Гитлер
Чи сĕмсĕр тăшман,
Ăна татăк-татăк
Турас килет ман.

Васька, урхамахăм,
Эс ыткăн мала;
Çав Гитлер пуçне халь
Касса татмаллах!

## Тухăр, тухăр уява!

Хĕвел тухрĕ хĕрелсе,
Ылттăн хĕмне сирпĕтсе.
Вăрмансенче, садсенче
Тĕрлĕ чечек çуралать;
Çав чечексем хушшинче
Тĕрлĕ кайăк юр юрлать.
Ай-хай кунĕ пит аван—
Тухăр, тухăр уява!
Тухăр чаплă тумланса,
Хĕрлĕ ялавсем йăтса.
Урамсем тăрăх каяр,
Савăк юрăсем юрлар.
Юрă кайтăр ян та ян!—
Майăн пĕрремĕш паян.
Юрă пирĕн мухтава
Илсе çиттĕр Мускава.
Мухтав аслă Сталина—
Ачасене савнăшăн.
Мухтав аслă Сталина—
Пире телей панăшăн.



## Васкăр, васкăр шкула

Иртсе кайрĕ ем-ешĕл çулла,
Килсе çитрĕ сарă кĕркунне.
Васкăр, васкăр, ачасем, шкула,
Ларма вăхăт партă хушшине.
Ларма вăхăт кĕнеке тытса,
Вĕренер-ха пурте тăрăшса.
Пĕлĕве çӳлтен-çӳле çĕклер,
Сталин ятте пире хушнă пек.
Ăслă, паттăр пулса çитĕнер,
Утар Ленин атте çулĕпе.



## Автобус

Тӳрӗ, тикӗс ҫулпала
Пӗр автобус вӗҫтерет,
Хӑйне ирӗк ҫул пама
Вӑл таҫтанах систерет:
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту-у!
Таптанатӑн вӗт, асту!

Ай-хай лаши хӑраса
Ҫул айккине сиктерет.
Автобусӗ васкаса
Тата хытӑ вӗҫтерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту-у!
Ҫулна лайӑхрах асту!



## Поезд

Вăрмантан вăшлатса
          Поезд тухрĕ,
Тăккăлтăк! тутарса
          Çил пек чупрĕ.
Ак, кĕпер урлă вăл
          Каçса кайрĕ,
Хулана курчĕ те
          Чăтаймарĕ:
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
          Кăшкăрса,
Пырса çитрĕ унта
          Чашкăрса.

## Çамрăк моряк

Петя питĕ пысăк мастер,
Петя мĕн кăна тумасть-тĕр!
Тытрĕ-турĕ вăл карап,
Ячĕ пулчĕ ун „Марат“.

„Марат“ тухрĕ тинĕсе,
Кайрĕ çăмăллăн ишсе.
Тинĕс хытă хумханать,
Айăн-çийĕн пăтранать.

Анчах паттăр капитан
Пăрăнмасть тӳрĕ çултан.
Çитес çĕре çитрĕ вăл,
Чараймарĕ çил-тăвăл.

Карап тăчĕ хурала
Инçет хĕвелтухăçне,
Тĕрĕссипе каласан—
Шывлă вăлашка пуçне.

Ан тив пултăр вăлашка,
Унăн вăййи çавнашкал.
Петя ӳссе çитĕ ак,
Вара пулĕ чăн моряк.

Пулĕ вăл линкор çинче,
Сыхлĕ Совет çĕршывне.
Ан тив халĕ вылятăр
Хăй юратнă вăййине.



## Парада

Хĕвел хĕртет тӳперен,
Савать пирĕн детсада.
Эпир тăнă йĕркерен:
Каяс тетпĕр парада.

Вĕл-вĕл вĕçеç ялавсем,
Мăкăнь çеçки пек вĕсем.
Пит аван, кăмăллă—
Стройпа утма çăмăллăн.

Вăштăр-вăштăр çил вĕрет,
Мана ялав парăр, тет.
Пулас çук,
Парас çук,
Сана ялав парас çук!

Çил, пире ан чăрмантар,
Кайса выля вăрманта.
Халь эпир
Юрласа
Май уйавне каятпăр.

## Почтальон

Пар лашапала,
Шăнкăравпала
Почтальон килет,
Çĕн хыпар кÿрет.

Ĕнтĕ ман валли
Çыру килчĕ пуль:
Аслă пиччерен —
Пограничникрен.

Хаклă почтальон,
Савнă почтальон,
Чар-ха пар утна,
Пар-ха çыруна.

Ĕнтĕ эпĕ те
Халь шкула çÿреп,
Ĕнтĕ эпĕ те
Вулама пĕлеп.

## Айтăр ярăнма

И юр çăвать, юр çăвать,
Хура çĕре шуратать.
Ай-хай, ачасем,
Тухăр урама!
Тухăр урама,
Юр купалама.
Юр купалăр юрласа,
Хĕл мучине ырласа.
Ай-хай ачасем,
Пĕрлешсе тусан,
Пысăк шур упа
Пулĕ шур юртан.
Вĕлтĕр-вĕлтĕр шурă юр,
Сив хĕлĕн те илем пур.
Ай-хай, ачасем,
Васкăр урама!
Илĕр йĕлтĕрсем,
Айтăр ярăнма.

## Лагере

Грузовик васкать
Аслă çулпала,
Шурă Шупашкар
Юлчĕ хыçала.

Грузовик пире
Леçет лагере:
Хĕвелпе хĕрме,
Çырласем çиме.

## Айтăр ёлкăна

Упа çури – утаман,
Ик урапа утакан,
Кахалланса ан лар-ха,
Паян çĕнĕ çул вĕт-ха.

Шур мулкачă, эсĕ те
Сивĕ тесе ан вырт тек.
Айтăр манпа ёлкăна,
Ача садне хăнана.

Юрлăпăр та ташлăпăр,
Тĕрлĕ вăйă выльăпăр.
Теттесем те илĕпĕр,
Конфет-премĕк çиййĕпĕр.

## Октябренок

Ун кăкри çинче вут-хĕмĕн
Хĕрлĕ çăлтăр йăлтăрать.
Октябренок ÿснĕçемĕн
Юрататъ çав çăлтăра.

Машинист пулса ун ашшĕ
Паровоз ертсе çÿрет.
Час-часах çак пĕчĕк Яша
Ашшĕне апат кÿрет.

Ак, пĕрре çапла, каç-кÿлĕм,
Яша тухрĕ станцăна.
Икĕ йĕрлĕ чугун çулĕ
Ялан илĕртет ăна.

Станцă çумĕнче пăш-пашшăн
Поезд чашкăрса ларать.
Паровозĕ вăшăл-вашăл
Хăмăр тĕтĕм кăларать.

Рельса çумĕн утрĕ Яша
Хĕвеланăç еннелле.
Пассажирскипе ун ашшĕ
Мускавран час килмелле.

Çил çинче ав, Яша çӳçĕ
Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçкелет.
Аякка пăхать ун куçĕ—
Машинпа çӳрес килет.

Машинист пуласшăн Яша,
Шухăшлать вăл тăтăшах.
Мускава кайса курасшăн
Савнă Сталин юлташа.

Акă халĕ пĕчĕк Яша
Çулпала хуллен утать,
Вăштăр-вăштăр çил йăвашшăн
Унăн çӳçĕпе вылять.

— Чим, ăçта ку? Мĕнле сасă
Рельса тăрăх илтĕнет?—
Яша хăвăрт та хавассăн
Тихалла сиксе илет.

Çивчĕ хăлхисем илтеççĕ:
— Тук-тăк! тук-тăк! Тук-тăк-тук!
Вагонсем кусса килеççĕ,
Паравозĕ темшĕн çук.

Октябренок час ăнланчĕ:
Кĕç крушени пулмалла!
— Вырăнтан сиксе тапранчĕ,
Çил пек чупрĕ каялла.

Ак хыçран çитсе таптассăн
Туйăнаççĕ вагонсем.
— Стрелочник!—тет çивĕч сасă—
Паравозсăр-çке вĕсем!

— Стрелкăна куçар! Тем пулнă:
Вагонсем хăйсем анчах...
Хăвăртрах! Пит çывăх юлнă.
Поезда ватаç пачах!..

Стрелочник, çакна илтсессĕн,
Çиçĕм пек хăвăрт тухса,

Вагонсем килсе çитсессĕн—
Ячĕ пуш йĕрпе пăрса.

Яша куçĕсем йăл кулчĕç:
Куçĕсем ун кăн-кăвак.
Мĕнле пысăк усă пулчĕ
Аслă тăван çĕршыва!



## Уявра

Вăл çитмĕл çичĕ кĕнеке
Илсе вуларĕ пуль шкултан.
Вара, чăн инженер пекех,
Чертеж ӳкерчĕ чи малтан;

Унтан ĕçлерĕ эрнипех.
Ĕçлерĕ, турĕ стратостат.
Паян, вăранчĕ те ирпе,
Сехет çине чăл-чал пăхать:

Тулта—уяв, хула янрать.
Пур халăх площаде утать.
Ванюк тумланчĕ васкаса,
Хавас та уççăн юрласа.

Вăл йăтрĕ те стратостатне,
Тухса вĕçтерчĕ урама.
Ун пĕчĕкçеççĕ йыттине
Кичем килте пĕччен ларма;

Вăл Ванюка хуса çитет,
Анчах Ванюк куçран çĕтет:
Сасартăк чăрсăр шухă çил
Вăшлатрĕ те килсе таçтан,—

Çĕкленчĕ кайрĕ стратостат.
Асту, Ванюк, ӳксе ан вил!
Маттур Ванюк, хăравçă мар.
—Айта, айта,—тет,—яра пар!..

Çапла вĕçсе вăл площаде
Пĕр самантрах пырса çитет.
Ăна пур халăх ал çупать,
Çулпуçĕ хăй савса мухтать.

## ТУПМАЛЛИ

*Стр.*

Октябренок юрри . . . . . . . . . . 3
Пулас кавалерист . . . . . . . . . . 4
Тухăр, тухăр уява . . . . . . . . . . 5
Васкăр, васкăр шкула . . . . . . . . 6
Автобус . . . . . . . . . . . . . . 7
Поезд . . . . . . . . . . . . . . . 8
Çамрăк моряк . . . . . . . . . . . . 9
Парада . . . . . . . . . . . . . . 10
Почтальон . . . . . . . . . . . . . 11
Айтăр ярăнма . . . . . . . . . . . 12
Лагере . . . . . . . . . . . . . . 13
Айтăр елкăна . . . . . . . . . . . 14
Октябренок . . . . . . . . . . . . 15
Уявра . . . . . . . . . . . . . . 16

Редактор Кузьма Чулгась.
Подписано к печати 27/XI-41 НТ 6676. Тираж 3000
Об'ем 0,75 п. л. Заказ № 399
г. Цивильск. Тип. Упр. Изд. и Полигр. ЧАССР.

Цена 50 коп.

А. Кӑлган

Ача-пӑча сӑввисем

на чувашском языке
ГОСИЗДАТ ЧАССР 1942